КОРРУПЦИ

# ИКĔ ÇУЛЛĂХА, УСЛОВНĂЙ МАЙПА...

## *Прокуратура шучĕпе, интернат директорĕн приговорĕ ытла та çемçе*

**Йĕпреçри психоневрологи интерначĕн ĕçченĕсем тĕлĕшпе нумаях пулмасть пĕр приговор палăртнăччĕ ĕнтĕ. Сестрасен айăплав итлеме тивнĕччĕ. Халĕ директор патне те черет çитнĕ. Çак кунсенче Йĕпреç районĕн сучĕ райпрокурор пулăшуçи А.Якушевич патшалăх айăплавçи пулса хутшăннипе Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин “Йĕпреçри психоневрологи интерначĕ” республика патшалăх учрежденийĕн директорĕн Илья Кузнецовăн ĕçне тишкерессине вĕçлесе приговор вуласа панă.**

ПРЕСТУПЛЕНИ тунă вăхăт – пĕлтĕрхи нарăс уйăхĕнчен тытăнса кăçалхи пуш уйăхĕччен. Психоневрологи интерначĕ – медицинăпа социаллă пурнăç ыйтăвĕсемпе ĕçлекен учреждени. Кунта шала кайнă психика чирĕсемпе чирлĕ ватăсемпе инвалидсем пурăнаççĕ. Вĕсене пăхмалла, хăйсем тĕллĕн кăна пурăнаймаççĕ. Çавна май пурлăхпа йăла енĕпе те тивĕçтермелле, килти евĕр условисем, хăтлăх туса пымалла. Паллах, çакăн валли укçа кирлĕ. Стационарта пăхса усранăшăн çак интернатра унта пурăнакансен пенсийĕн 75 процентне тӳлемелле. Çак шута апат-çимĕçпе, çемçе инвентарьпе тивĕçтермелли нормăсем те кĕреççĕ.

Çапла вара “Йĕпреçри ПНИ” РПУ директорĕн те, интернат администрацийĕ çумĕнче йĕркеленĕ попечительсен /опекунсен/ канашĕн те чирлисен, хăйсем тĕллĕн йышăну тума пултараймаççĕ тесе палăртмансккерсен, пенсийĕн юлнă 25 процент чухлĕ пайĕнчен хушма укçа пухассине йĕркелемелли нимĕнле полномочи те пулман.

Суд тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, И.Кузнецов директорта ĕçленĕ май хăйĕн полномочийĕсен картинчен тухакан ĕçсем тунă, çавна май граждансен прависемпе саккунлă интересĕсене, обществăпа патшалăхăн саккун хӳтĕлекен интересĕсене пăснă.

Мĕн тунă-ха? Учреждение пенси панă кунсенче уйăхсерен вăл опекунсен канашĕн ларăвĕсенче çак канаш членĕсене – интернат бухгалтерне Юдинăна тата Кузнецова санитаркăна – хушусем панă: кашнийĕн пенсийĕнчен укçа тытса юлмалла. Пĕлтĕрхи нарăсран тытăнса кăçалхи пуш уйăхĕччен çак йĕркепе усă курнă. Укçа пухнине нимĕнле те шута илмен, тивĕçлĕ документсем çырса хатĕрлемен. Пухнă укçана директор таварсем туянма РПУ снабженецне Сагатдинова пама хушнă.

Çулталăк ытла иртнĕ – çак тапхăрта Кузнецовăн йышăнăвне пурнăçласа интернатри ватăсемпе инвалидсенчен вĕсем килĕшмесĕрех пĕтĕмпе 3 миллион тенкĕ ытла укçа пухнă. Юдинăпа Кузнецова пуçлăх хушăвĕнчен иртеймен, уйăхсерен саккунпа килĕшсе тăман “тивĕçе” пурнăçласа пухакан укçана вырăн виткĕчĕсем, курткăсем, халатсем, джемперсем, ытти япала туянма парса тăнă.

Суд çакнашкал ĕç-хĕл интернат пăхса усракан çынсен Конституципе пăхнă прависене пăснă тесе палăртнă. Вĕсем хăйсен пурлăхĕпе хăйсем пĕлнĕ пек усă курайман, хуçаланайман-çке. Çакна патшалăх ĕç-хĕлĕн тĕп принципĕсене тата социаллă хӳтлĕх сферинче инвалидсен прависене пăхăнассин гарантийĕсене дискредитацилени, патшалăх органĕсен социаллă сферăри авторитетне сиенлени тесе хакланă.

Патшалăх айăплавçи тăратнă материалсене тишкернĕ май суд айăпланакан преступлени тунине туллин çирĕплетнĕ. Çавна май Илья Кузнецов РФ Уголовнăй кодексĕн 286 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленишĕн айăплă тесе йышăннă, 2 çуллăх тĕрĕслев вăхăчĕ палăртса ăна 2 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă. Çак тапхăрта унăн патшалăх органĕсемпе учрежденийĕсенчи тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчи йĕркелӳпе, администрацие хуçалăх тивĕçĕсемпе çыхăннă должноçсене йышăнма юрамасть.

Çапах пăнчă лартнă теме иртерех-ха. Республика прокуратурин пресс-службе пĕлтернĕ тăрăх, патшалăх айăплавçи район сучĕ интернат директорĕ тĕлĕшпе палăртнă условнăй айăплавпа килĕшмен, вăл ытла та çемçе тесе Чăваш Енĕн Аслă сучĕн суд коллегине представлени тăратнă.

■ **К.САМОЙЛОВ**